**Выçă аптранăскерсем**

Кукашшĕне итлесе
Ларать ача сак çинче.
Хăйă çунать ташласа.
Хура пўрте çутатса.
Ватти тăвать çăпата
Хăй юмахне çаптарса.
Юмах юман тăрринче.
Халап хапха тăрринче.

* * *

Пурăнаттăн пит аван.
Курайманччĕ виç куна.
Анчах, тăванăм, паян
Апат лекни çăварна?
Ларса хырăм тăранмасть,
Мĕнле шухăш шухăшлан?
Ĕç шырарăн – тупăнмасть,
Ăçта каяс тен паян?
– Илĕп çĕçĕ, пурттăма,
Чĕнĕп пĕрер юлташа.
Кайăп юта, вăрлама...
Ан асăнăр чăваша.

* * *

Иван пичче пўртĕнче
Выçă ларнă виçĕ кун.
Анкă-минкĕ пуçĕнче
Çапла шухăш пулнă:
«Тата пăртак ларсанах
Апат килĕ тухĕ ак!»
Ак тамаша: çавăнтах
Вĕçсе кĕчĕ пĕр курак!
Леш, выçăскер, куракне
Пăхса-туса тăмарĕ,

Мĕнле апат иккенне
Авантарах пăхмарĕ:
«Апат килчĕ» терĕ те.
Ячĕ илчĕ çавăнтах...
Курак пуçĕ пĕтрĕ те,
Курак пиçрĕ вутсăрах.

* * *

Çӳлте пĕлĕт кăн-кăвак,
Ура айĕ — шурă юр.
Хирте çӳрет выç тукмак.
Унăн пурăнăç – хĕн-хур.
Çӳрет тукмак кăнтăрла,
Çӳрет тукмак çĕрĕпе,
Пырса кĕрет ялалла –
Çын хăратать йыттипе.
Анчах апат тупăнмасть,
Унăн выçă вилмелле...
Тукмак ӳкнĕ, хускалмасть,
Пăхрĕ вилĕм килнелле.

* * *

Пĕтерчĕ те юмахне
Ватти хушрĕ сăмахне
– Çапла, ачам, выçăхсан,
Çын тухать çав ухмаха.
Хăшĕ, çиме пулмасан,
Тухать вăрă-хураха;
Хăшĕ, Иван ухмах пек,
Курак çиет аташса.
Хăшĕ, сăрă тукмак пек,
Вилсех каять выçăхса.

*1907*

*Иванов, К. Выçă аптранăскерсем : [сăвă] // Иванов, К. В. Çырнисен пуххи / К. В. Иванов ; Г. Ф. Юмарт пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 2000. – С. 27-28.*